# ЮХАТЬ ЮХАНШЫВ



Эпир пурнатпăр вăрман хĕрринче
çырла татса, çырла сутса, ерипен.
Юхать юханшыв,
юхмасть вăл тăвалла;
иртет пир[е]н ĕмĕр,
килмест вăл каялла.

Эпир пурнатпăр вăрман хĕрринче
милĕк касса, милĕк сутса, ерипен.
Юхать юханшыв,
юхмасть вăл тăвалла;
иртет пир[ĕ]н ĕмĕр,
килмест вăл каялла.

Эпир пурнатпăр вăрман хĕрринче
кăмпа татса, кăмпа сутса, ерипен.
Юхать юханшыв,
юхмасть вăл тăвалла;
иртет пир[ĕ]н ĕмĕр,
килмест вăл каялла.

Эпир пурнатпăр вăрман хĕрринче
мăйăр татса, мăйăр сутса, ерипен,
Юхать юханшыв,
юхмасть вăл тăвалла;
иртет пир[ĕ]н ĕмĕр,
килмест вăл каялла.

Эпир пурнатпăр вăрман хĕрринче
пушăт сӳсе, пушăт сутса, ерипен.
Юхать юханшыв,
юхмасть вăл тăвалла;
иртет çамрăклăх,
килмест вăл каялла.